Чăваш Республикин Вăрнар районĕнчи
«Çĕрпелти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул»
муниципаллă бюджет учрежденийĕ

# «Кĕрхи уяв»

Вăтам ушкăнри ачасемпе ирттермелли концерт программи

Воспитатель: Леонидова
Ольга Васильевна

Ĕç тĕллевĕ: Çут çанталăк илемне курма, унпа киленме хăнăхтарса пырасси, чĕлхе сăнарлăхне, сăвăсемпе юрăсен илемне туйма, курма вĕренсе пырасси, ачасен калаçу пуплевне аталантарасси, ачасене савăнаç кӳрессси.

Усă курмалли материалсем: Керкунне тумĕ, Мучи тумĕ (шлепке, алса, шăпăр, саппун), Чĕрĕп тумĕ, карçинкка, картунтан ăстланă кăмпасем, çулçăсем, маскăсем (сухан, кишĕр, купăста), Кĕркуннен кучченеçĕсем – панулмипе кишĕрсем ачасен шучĕпе.

Ĕç йĕрки:

*Музыка залне кĕрхи çулçăсенчен тунă йывăçсемпе илемлетнĕ. Урайĕнче çулçăсем, çӳлте пĕлĕтсем çакăнса тăраççĕ, пĕр пĕлĕчĕ хыçĕнче пĕчĕк лейкăпа шыв çакса янă.*

*Хаваслă кĕвĕпе ертсе пыраканпа ачасем зала кĕреççĕ, хăнасене сывлăх сунаççĕ, сăвă калаççĕ.*

**Сăвăсем:**

*1-мĕш ача*

Çитрĕ, çитрĕ ылтăн кĕр –

Тараваt та пуян хĕр.

Уçрĕ эреш арчине,

Парнелерĕ парнине.

*2-мĕш ача*

Хăмăр кĕпе – юмана,

Хĕрлĕ шăрçа – палана,

Çыхрĕç сарă тутăрсем

Пике евĕр хурăнсем.

*3-мĕш ача*

Упа валли – пыл катки,

Чĕрĕп валли – уплюнкки,

Тулли мăйăр – пакшана,

Тусăм, ан ӳркен кăна!

**Юрă «Кĕркунне»**

*Л. Смолина сăвви, И. Степанов кĕвви*

Урамра йĕпе-сапа,

Сивĕрех иркӳлĕм.

Тĕксĕм, тунсăхлă сăнпа

Тĕлĕрет çут кӳлĕ.

Çыхрĕ сарă тутăрне
Йăрăс пӳллĕ хурăн.
Асилет пуль çу кунне:
Хурлăх сĕмĕ пур ун.

Килсе çитрĕ кĕркунне,
Кĕлетре – сар тулă.
Çул тытаç кăнтăр енне
Кайăксем салхуллăн.

*Уява Мучи кĕрет, аллинче шăпăр. Музыка залĕн илемĕпе килленсе тăрать, кĕркунне çинчен сăвă калать:*

Ача сачĕн кĕр уявĕ
Хавас кулăпа çиçет.
Кĕркуннехи тумпала
Илемленнĕ пирĕн зал.
Кашни çулçă хĕвел пек
Чăн-чăн ылтăн ахах пек.
Çулçăсене тултарам
Карçинкка тĕпне хурам.
Тултарам та туллиех –
Илемĕпе савăнам.

***Ертсе пыракан:*** Мучи, эсĕ çулçăсене шăлса пуçтарма ан васка-ха. Пирĕн те вĕсемпе выляса-ташлас килет.

***Мучи:*** Хамăн та шăлас килмест-ха, питĕ шел çулçăсене тухса пăрахма. Выльăр, савăнăр апла çулçăсене пуçтарса.

*Ачасем çулçăсем пуççтараççĕ.*

***Ертсе пыракан:*** Халĕ эпир ачасемпе кĕркуннехи çулçăсен ташшине ташлатпăр, Мучи, эсĕ те пирĕнпе ташласа савăн.

**Ташă «Çулçăсен ташши»** илемлĕ кĕвĕпе.

***Ертсе пыракан:*** Пирĕн ачасем илемлĕ çулçасем çинчен юрă та юрлама пĕлеççĕ. Итлесе пăхар-ха вĕсене.

**Юрă «Çулçă»**

*Сăвви Ю. Сементерĕн,   кĕвви Н. Казаковăн*

Пĕр ирхине сап-сарă çулçă

Ман кантăкран кĕресшĕн пулчĕ.

Çил алхасса çӳренĕрен-тĕр

Вĕçсе хăпарчĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр.

Малтан вăл тĕк пекех çĕкленчĕ,

Сив сывлăш хумĕнче чӳхенчĕ.

Ытла çӳлте, тен, кăшт шикленчĕ,

Аялла анма пикенчĕ.

Унтан пур-çук вăйĕпеле

Васкарĕ кантăк еннелле.

Ман çĕнĕ тетраде, тен, çулçă

Сăвă пулса кĕресшĕн пулчĕ.

***Ертсе пыракан:*** Ачасем, пăхăр-ха çӳлелле, пĕлĕтсем пур кунта. Кĕркуннехи çанталăк пите хăвăрт улшăнать: халĕ хĕвел пăхать, кĕçех çумăр çăвать. Халĕ те, авă, тӳпере пĕлĕтсем пур, çумăр çăвасшăн пулмалла.

Пĕлĕтсене питĕ тăвăр,

Çук-çке вырăн тӳпере.

Вырăн çукран тӳпере

Вăрçса кайрĕç пĕлĕтсем,

Макăраç пурте пĕрле.

«Çумăр килет, тарăр пурте!»

Кăшкăраççĕ ачасем.

Савăнса йăл-йăл кулса

Зонтик айне пытанаç.

*Пĕлĕтсем макăраççĕ, çумăр çăвать, ачасем зонтик айне пытанаççĕ.*

**Вăйă «Хĕвелпе çумăр» 3 хутчен.**

***Мучи*:** Ну маттур та вара эсир ачасем, ну савăнтартăр та вара эсир мана. Эпĕ халĕ сирĕнпе сывпулашасшăн. Малалла та маттур пулăр. Эпĕ вара ача сачĕ ӳменчи çулçăсене тухса шăлам-ха. Эсир вара уява малалла тăсăр. Сывă юлăр.

***Ачасем*:** Лайăх кайăр.

**Сăвăсем:**

*1-мĕш ача*

Тунсăхлă ӳкерчĕк:

Çулçă вĕл ӳкет.

Çумăр пĕрĕхтерчĕ,

Пĕлĕтлĕ тӳпе.

*2-мĕш ача*

Шăратмаççĕ юрă

Кайăксем текех.

Ешĕл йывăç-курăк

Сарăхать веçех.

*3-мĕш ача*

Пурпĕр киленетĕн

Ылтăн вăрманпа.

Хăй патне пурне те

Йыхăрать кăмпа.

*Зала тулли карçынкка кăмпа тултарнă, туя тытнă чăрĕп кĕрет.*

***Чĕрĕп:*** Сывă-и, ачасем? Хĕр ачасем тата арçын ачасем! Эпĕ чĕрĕп. Тинех сипрĕн пата вăрмантан çитрĕм. Çулне аран-аран шыраса тупрăм. Васкаса килтĕм, ывăнсах çитрĕм. Кунта çитейместĕп пулĕ тесе кулянтăм.

***Ертсе пыракан:*** Сывах чĕрĕп. Эсĕ пирĕн уява килнишĕн эпир питĕ хавас.

***Чĕрĕп:*** Эпĕ сирĕн пата пушă алăпа килмерĕм. Туп-тулли карçынкка кăмпа татса килтĕм. Сире кучченеç пултăр терĕм. Анчах та эпĕ ăна сире ахаль парас теместĕп. Сирĕнтен эпĕ кăмпасем çинечен çавăсем кĕтетĕп.

***Ертсе пыракан:*** Чĕрĕп, пирĕн ачасем сана кăмпасем çинчен сăвăсем хаваспах каласа параççĕ. Эсĕ вара пире итлесе лар.

**Сăвăсем:**

*1-мĕш ача*

Çулçă айĕнчи кăмпа

Пит ӳсесшĕн сас парать:

«Пулăшсамăрччĕ мана –

Çулçă ман çутта хуплать».

*2-мĕш ача*

Тупрăм эпĕ вăрманта

Ăвăс кăмпи, сар кăмпа.

Тупрăм хыр кăмпи, шурри.

Шур кăмпа вăл – чи тутли.

Тупрăм кăрăç, уплюнкка –

Туп-тулли ман карçинкка.

*3-мĕш ача*

Алла-алăн тытăнса,

Пĕр-пĕриншĕн савăнса

Вăййа тухнă кăмпасем,

Шăратаççĕ юрăсем.

Уплюнкка тутлă тесех

Татрăм эп упаленсех.

*4-мĕш ача*

Вăрманта, вăрманта

Кăмпасем ӳсеççе.

Шăтаççĕ, ӳсеççĕ,

Карçинккана кĕреççĕ.

***Чĕрĕп:*** Питĕ пултаруллă эсир ачасем. Сăвăсем нумай пĕлетĕр. Анчах та эсир кăмпасене паллатăр-и-ха. Çак карçинкара çимелли тата çиме юрăхсăр кăмпасем пур. Сирĕн çак кăмпасене палласа икĕ карçинккана уйăрмалла пулать.

***Ертсе пыракан:*** Апла пулсан эпир ачасемпе икĕ ушкăна пайланатпăр та ăмăртăва пуçлатпăр.

**Вăйă: «Кăмпасене пайласси»**

***Чĕрĕп:*** Чăннипех те маттур вара эсир ачасем. Савăнтартăр мана. Халĕ манăн вăрмана çул тытмалла, хĕле хатерленмелле. Эпĕ сире çитес çул вăрмана чĕнетĕп. Вăрман илемĕпе килленме тата кăмпа-çырла пуçтарма. Сывă юлăр ачасем.

*Чĕреп каять.*

***Ертсе пыракан:*** Халĕ сире пирĕн арçин ачасем ташă парнелеççĕ.

**Ташă «Кăмпасен ташши»**

*Зала илемлĕ кĕвĕпе Кĕркунне кĕреть.*

***Ертсе пыракан:***

Акă çитрĕ кĕркунне

Ылтăн тĕслĕ кĕпипе.

Хĕрлĕ, сарă çулçăсем

Вĕлкĕшеççĕ кунĕпе.

***Кĕркунне:*** Ырă кун пултăр, манăн пĕчĕк тусăмсем. Акă эпĕ çитрĕм те. Еплерех илемлĕ сирĕн кунта паян. Кĕркуннене питĕ кичем вăхăт тесе калаççĕ те, анчахсавăнма пĕлсен пертте тунсăхлă вăхăт мар вăл. Çапла вĕт, ачасем.

***Ачасем:*** Çапла, çапла. Эпир кĕркунне çинчен тепĕр юрă та пĕлетпĕр.

**Юрă «Кĕркунне»**

*В. Харитонов сăвви, И. Степанов кĕвви*

Шăннă, ĕнтĕркеннĕ

Çамрăк улмуççи.

Çарă тум пĕркеннĕ

Çирĕк йывăççи.

Авăнать вулли тек,

Çулçисем чĕтреç.

Кивелми тумли те

Симĕс чăрăш çеç.

Лĕпĕш евĕр çулçă

Вĕлтлетсе вĕçет.

Шур юрах тен пуль çав

Хăнана чĕнет.

***Кĕркунне:*** Питĕ хитре юрă шăрантартăр вара ачасем. Питĕ пултаруллă-çке эсир.

***Ертсе пыракан:*** Кĕркунне, пирĕн ачасем пянхи уяв валли сăвăсем те хатĕрленĕ. Итлесе пăхар-и?

***Кĕркунне:*** Итлесе пăхар.

**Сăвăсем:**

*1-мĕш ача*

Вăрман çаралнă витĕрех

Çывхарчĕ кĕркунне
Юманлăх илĕртет пире
Пухмашкăн йĕкелне.

*2-мĕш ача*
Ял çумне, çерем çине,
Ларса тухнă кураксем.
Ушкăнпа ăшă енне
Кайма пухăннă вĕсем.
«Сывă пул, Макар!» – тесе
Кар çĕкленчĕç тӳпене.
Юр пĕрчи вĕлтĕртетсе
Ӳкрĕ ман тута çине.

*3-мĕш ача*
Çурçĕртен сив çил вĕрет.
Иртенпех çумăр çавать.
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пĕрĕхет
Кĕркунне çапла пулать.

*4-мĕш ача*
Тин кăна хĕвел çуталчĕ,
Тепĕр хут кĕрсе çухалчĕ.
Вăл вылясшăн пулмалла
Манпала пытанмалла.

*5-мĕш ача*
Эпĕ пĕчĕк хĕрача
Хам шăвартăм пĕр пахча.
Халĕ ĕнтĕ курăр-ха
Йăранти хуçалăха.

*6-мĕш ача*

Юрататăп эп çиме

Хĕрлĕ тĕслĕ кишĕре.

Ачасене çитĕнме

Кишĕр питĕ пулăшать.

*7-мĕш ача*

Купăстийĕн пуçесем

Шап-шурă та сарлака.

Хăшне çыртса пăхам-ши?

Хăшне татса каям-ши?

***Кĕркунне:*** Ачасем, эсир мана хитре сăвăсем каласа савăнтартăр. Сире эпĕ халĕ тупмалли юмахсем парас тетĕп. Эсир вата тупсăмĕсене шырăр. Пурте хатĕр-и?

***Ачасем:*** Хатĕр.

***Кĕркунне:*** Çитмĕл хут тăхăннă, пĕрне те çĕлемен. (Купăста)

Кам мана салантарать, çав куççулĕ кăларать. (Сухан)

Чавăп, чавăп, кĕмĕл тупăп. (Çĕр улми)

***Кĕркунне:*** Ку çимĕссем пирĕн пурте пахчара ӳсеççĕ. Çапла-и ачасем?

***Ачасем:*** Çапла.

***Ертсе пыракан:*** Эппин Кĕркуннене пахча çинчен те юрă юрласа парар-ха.

**Юрă «Пахчара»**

*П. Ялкир сăвви,    И. Степанов кĕвви*

Пахчана тухса ĕçлерĕм

Аннепе пĕрле чунтан.

Йăран пулчĕ питĕ селĕм –

Лартрăмăр унта сухан.

Йăрана пĕр ӳркенмесĕр

Кăпкалатрăм час-часах.

Ешĕл-ешĕл вĕтлĕх евĕр

Сухан ӳсрĕ ашкăнса.

***Кĕркунне:*** Чăнах та, эпĕ паян çав тери пултарулла ачасем патне лекрĕм. Сире  эпĕ, кĕрхи уяв ячĕпе саламласа, тулли карçинка кучченеç парнелетеп. Пурте хăналанăр. Кунта кишĕрĕ те, панулмийĕ те пур. Çирĕп сывлăхлă пулăр, маттур çитĕнĕр.

***Ачасем:*** Тавтапуç сана, Кĕркунне.

***Кĕркунне:*** Халĕ вара манăн кайма та вăхăт çитрĕ. Çитес çулччен ачасем, сывă юлăр.

*Ачасем кĕркуннене ăсатса яраççĕ.*

***Ертсе пыракан:*** Акă пирĕн кĕрхи уяв вĕçленчĕ те. Эпин пурне те сире Кĕркуннен кучченеçĕсемпе хăналанма хамăр ушкăна чĕнетпĕр.

Хаваслă кĕвĕ янăрать. Ачасем залран тухса каяççĕ.

Усă курнă литература:


1. Гордеева С. Д.  Корзина с грибами.  Карçинккари кăмпасем: стихи / С.Д. Гордеева. – Чебоксары: Чуваш. Кн. Изд-во, 2014. – 31 с.
2. Карай Н.Д. Ураллă купăс: Сăвăсем  / Н.Д. Дмитриев. – Шупашкар: Чăваш кĕнене изд-ви, 2009. – 31 с.
3. Людмила Николаева Сывлăм ăçтан тупăнать?: Сăвăсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви,, 2005. – 16 с.
4. Людмила Николаева Кĕр парни: Сăвăсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2011. – 32с.
5. Пётр Ялгир. Сукмак. Тропинка: Сăвăсем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. – 32 с.
6. Степанов И. Р. Эпир çуралнă юрлама. Ача сачĕсемпе шкул ачисен юррисем. – Шупашкар: «Çĕнĕ вăхăт», 2012. – 272 с.
7. Чăваш композиторĕсен юррисем: Юрăсен пуххи. Шкул ачисем валли / Л.В. Кузнецова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. – 192 с.